## ВĂРМАР РАЙОНĔНЧИ КИВĔ ВĂРМАРТИ ВĂТАМ ШКУЛ



# Чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕнчинче

(Кĕçĕн класри ачасемпе ирттермелли уяв сценарийĕ).

- **Тĕллевĕ:**
  - **- чăваш халăхĕн авалтан пынă йăли-йĕркисене, сăвă-юрăллă, вайă- ташăллă уявĕсене упраса хăварасси;**
- **Задачисем :**
- -ачасен пуплев, шухăшлав енĕсене аталантарасси.
- -ачасене ырă та тӳрĕ кăмăллă пулма, ваттисене хисеплеме, тăван халăхпа çĕр-шыва юратма вĕрентесси.
- -чăваш ташши – юррине, тăван чĕлхе илемне туйма хăнăхтарасси.

- **Уяв мелĕсемпе меслечĕсем :**
- Интернетра, Чăваш Республикин сайтĕнче ,чăваш юмах-халапĕсене,ача-пăча вăййисене,сăпка, чăваш юррисене, ваттисен сăмахĕсене, чăваш ташшисене, сăввисене тишкерсе тухрăмăр, ҫыртарса илтĕмĕр. Ҫавăн пекех тĕрлĕ ҫулсенче вĕренме усă курнă «Тăван сăмах» тата хушма вулав кĕнекисене пăхса тухса хамăра кăмăла каякан кирлĕ материалсене ҫырса илтĕмĕр.
- Малтан ăнланман сăмахсемпе паллашрăмăр,унтан палăртуллă вулама, пăхмасăр калама вĕрентĕмĕр.
- Чăваш юрри- ташшисене вĕренме ялти фольклор «Мерчен» ушкăнĕпе тĕлпулу ирттертĕмĕр. Вĕсем мĕнле юрланине итлерĕмĕр, ташланине куртăмăр. Вĕсен юррисене ҫырса илтĕмĕр, чăваш ташшин тĕрлĕ хусканăвĕсене вĕрентĕмĕр.
- **Кирлĕ хатĕрсем:**
- Ручка, хут, магнитофон, проигрыватель, чăваш тумĕсем, тĕрлĕ музыка инструменчĕсем.

# СĂПКА ЮРРИСЕМ

Нянине-паппине,
Ачине – сăпкине.
Лăштăр-лăштăр ярăнма,
Шăппăн-шăппăн çывăрма…



Нянине-тунине,
Ачине-урине,
Тăппи-таппи çӳреме,
Кăрăс-кăрăс тутарма.

# ЙĂПАТМАЛЛИ СĂВĂСЕМ
# ШУТЛАВ СĂВВИСЕМ

Пысăк пул, пысăк пул,
Уссен маттур ача пул,
Юрлама та ăста пул,
Ташлама та маттур пул :



Вĕл-вĕл вĕлтĕрен,
Вĕлтĕрен ăшĕнче
Сар кайăк чĕппи пур.
Эс те чипер, эп те чипер,
Чăн чиперри-сик тух!



# ВĂЙĂСЕМ

<u>«Пиçихҳи пăрахмалла»</u>

Эп утатăп хурланса,
Хама юлташ шыраса
Утсан-утсан чупатăп
Пиçихҳи пăрахса хăваратăп.



«**Çерем ватса вир акрăм»** -

-Çерем ватса вир акрăм, вир акрăм. (2 хут)
-Эпир ăна, эпир ăна таптатпăр. (2 хут )
- Эсир мĕнпе таптатăр, таптатăр?
- Утсем ярса, утсем ярса таптатпăр.





# МАХСЕМ. ПУЛМАСЛА ХАЛАПСЕМ.

**Мулкач.**

Эпир пӗрре асаттепе сунара кайрӑмӑр. Пӗр мулкач куртӑмӑр. Хӑвалама тытӑнтӑмӑр. Хӑваласа ҫитрӗмӗр те кӳсӗкпе иле-иле ҫапатпӑр — вилмест. Эпӗ хам хыт курӑкпа кӑна петӗм — мулкач вилчӗ кайрӗ.

Асаттепе иккӗн ҫӗклесе хума тӑратпӑр — хураймастпӑр. Хам пӗчченех тытрӑм та мулкача ҫӗклерӗм хутӑм.

Пар лаша кӳлнӗ хамӑр. Пар лашана хӑвалатпӑр — туртаймаҫҫӗ. Пӗрне тӑварса, пӗрне кӑна хӑвартӑмӑр — туртать.

Киле таврӑнтӑмӑр. Мулкача асаттепе йӑтма тӑратпӑр — йӑтаймастпӑр. Пӗччен тытрӑм та вӑштах йатрӑм.

Алӑкран кӗртме тӑратӑп — кӗмест. Тӗнӗрен тӗртрӗм те — кӗчӗ кайрӗ. Мулкача хуранта пӗҫерме тӑратпӑр — кӗмест. Ҫӑпалана хуратпӑр — тулмасть.

Аннене пӗҫерме хушрӑм. Анне пӑхса тӑман та, яшки хытӑ вӗренӗ, мулкач вӗренипе хурантан тухнӑ та ӳкнӗ. Ӑна кушак ҫинӗ те янӑ. Мулкача хамӑр ҫиеймерӗмӗр те.

- **Тилӗпе упа**

Тилӗпе упа тус пулнӑ. Вӗсем пӗрле ӗҫсе ҫинӗ. Вӗсен пӗр черес пыл пулнӑ.
Ӑна тилли вӑрттӑн ҫинӗ. Упи калать, тет:
— Пыла кам ҫинӗ? — тесе калать, тет. — Эс ҫинӗ пуль!
Тилли калать, тет:
— Эп ҫимен, ху ҫинӗ пуль! — тесе калать, тет.
Упи калать, тет:
— Эп ҫимен!
Тилли калать, тет:
— Атя кӑмакана кутӑн тӑрса хӗртӗнер! — тесе калать, тет.
— Камран пыл тухать, ҫав айӑплӑ пулӗ.
Упи калать, тет:
— Атя, эппин, тӑрар!
Тӑраҫҫӗ, тет, кӑмака хутнӑ чухне. Тӑра-тӑра упи ҫывӑрсах кайнӑ, тет, Упи ҫывӑрса кайнӑ, тет те, тилли пыл илнӗ, тет, упи ҫумне сӗркеленӗ, тет. Упана:
— Тӑр-ха! — тесе калать, тет. — Санран пыл тухрӗ, — тесе калать, тет.
Упа айӑплӑ пулчӗ, тилли тӳрӗ пулче, тет.



# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮРРИ






**<u>Улми лайăх-и?</u>**

Улми лайăх-и,
 çеçки лайăх-и?
Пирĕншĕн пулсан çеçки лайăх.
улми тата лайăхрах.

Шĕшки лайăх-и,
мăйăрĕ лайăх-и?
Пирĕншĕн пулсан шĕшки лайăх,
мăйăрĕ тата лайăхрах.

Уй-хир лайăх-и,
 тыр-пул лайăх-и?
пирĕншĕн пулсан уй-хир лайăх,
тыр-пул тата лайăхрах.

Юрри лайăх-и,
ташши лайăх-и?
Пирĕншĕн пулсан юрри лайăх,
ташши тата лайăхрах.Эх!

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ТАШШИ






- Линкка-линкка авкаланма юман хăма кирлĕ
  Халь те юман, халь те юман, тата юман кирлĕ

  Йăкăш-якăш шуçкалама яка хăма кирлĕ
  Халь те яка, халь те яка, тата яка кирлĕ

  Тапăр-тапăр ташлама кĕмĕл пушмак кирлĕ
  Халь те кĕмĕл, халь те кĕмĕл, тата кĕмĕл кирлĕ

  Чуп-чуп чуп тума чипер хĕрĕ кирлĕ
  Халь те чипер, халь те чипер, тата чипер кирлĕ

# ВАТТИСЕН СӐМАХӖСЕМПЕ КАЛАРӐШСЕМ










- Вӗрентекен пур чухне ***вӗренсе юл.***
- Чӗлхепе мар***, ӗҫпе мухтан***.
- Алӑра ӗҫ пултӑр***, пуҫра ӑс пултӑр.***
- Ҫӑкӑртан ***аслӑ ан пул.***
- Ват ҫын-***тӑват ҫын.***
- Вӑйӑран ***вӑкар тухать***.
- Ҫӑкӑр-тӑвар ***хире-хирӗҫ.***
- Макра-макра ӗҫлекен ***кула-кула ҫинӗ тет.***
- Кӗркунне ҫитсен, ***пурте тутӑ.***
- Кӗр пуҫтарать , ***хӗл салатать.***

# КĂСĂК ЫЙТУСЕМ. ШӲТСЕМ.ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕМ.







- Йĕкĕт, Мĕкĕт, Чĕпĕт пасара кайнă. Йĕкĕтпе Мĕкĕт киле таврăннă, пĕри ӳксе юлнă. Хăшĕ ӳксе юлнă?

  Миша, Гриша, Çатлаттар кимĕпе ишсе пынă. Мишăпа Гриша шыва путнă. Кимĕ çинче кам юлнă?
- *- Тинĕс тĕпĕнче мĕнле чул выртать?*
- Çĕрелле пăхрăм-хура куртăм, çӳлелле пăхрăм-кăвак куртăм.
- Ĕçлет, ĕçлет-ывăнмасть.
- Шыва кĕрсен те типĕ çӳрет.

# СĂНАВСЕМПЕ ПАЛЛĂСЕМ



Йытă хутланса выртсан- сивве,
урисене тăсса выртсан- ăшша,
урăк синче йăвалансан,
ҫил тухать.



Кушак сĕтел урине чăрмаласан,
ҫулла ҫумăр пулать,
хĕлле тăман пулать.

# ОРЛАМА ТА ТАШЛАМА ТА ПИТ ĂСТА ЭПИ






- Пĕчĕк çеç путене
- Сарă тулла юрататъ,
- Юрататъ, юрататъ
- Чăнахах та юрататъ.

- Пĕчĕк ача Петĕр пур
- Сад пахчине юрататъ.
- Юрататъ, юрататъ
- Чăнахах та юрататъ.

- Сад пахчине тухатъ те,
- Улма-сырла пуçтаратъ,
- Пуçтаратъ , пуçтаратъ
- Чăнахах та пуçтаратъ.

- Улма-çырла пуçтаратъ,
- йыш пуçтарса хăналатъ.
- Хăналатъ, хăналатъ
- Чăнахах та хăналатъ.




Выляр-и, кулар-и?
Туссем пĕрле савнар-и?
Юрлар-и? Ташлар-и?
Ĕмĕр пĕрле пурнар-и?







# АВТАПУÇ ПИРЕ ИТЛЕНĔШĔН!

**Вĕрентекен:**

***Пирĕн вайă-кулă,ташă – юрă вĕçленчĕ. Малашне паян юрланă юрăсене, ташăсене, вăйăсене манса каяс марччĕ.***

***Ĕçре, вĕренӳре тăрăшса, хавхаланса вăй хурăр.***

# УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА:


- Трофимов Г.Ф. Ача-пăча самахлăхĕ, Ш.. Чăваш кĕнеке издательстви, 1993 с, 304с.
- Тĕрлĕ çулсенче вĕренме усă курнă «Тăван сăмах» тата хушма вулав кĕнекисемпе усă курнă.
- Воронцов Г.И. Ача-пăча вăййисем. Ш., Чăваш кĕнеке издательстви, 1992,128 с.